25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 ИЮНЬ 30 ЫТЛАРИКУН 150(6085) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлеш ĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Ĕç хатĕрĕсене васкасах юсамалла

Кăçалхи çул тырпул пĕлтĕрхинчен вăйлăрах пуласси курăнсах тăрать. Вĕри ĕç вăхăчĕ пуçланиччен шутлă кунсем юлаççĕ. Вăйлă тырпула пухса кĕртме юсавлă машинăсем, тĕреклĕ те çирĕп инвентарь кирлĕ.

МТС директорĕсемпе старши механиксен çак кунсенче пулса иртнĕ республикăри канашлăвĕ МТС-сенче тата МТС-сем ĕçлесе паракан колхозсенче тырпул пухса кĕртмелли машинăсене юсас ĕç начар пынине палăртрĕ. Машинăсем тĕлĕшпе ĕç çапла начар тăрать пулсан, ытти тĕрлĕ инвентарьсене юсаса хатĕрлесси вара татах та начартарах.

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн производство управленийĕнче: «пирĕн халĕ чи малтанхи задача комбайнсемпе жнейкăсене юсасси пулса тăрать», теççĕ. Çавна пулах ĕнтĕ транспорт инвентарĕсемпе ытти ĕç хатĕрĕсене юсас ĕç республикăра мĕнле пынине кунта тивĕçлипе шута та илмеççĕ. Çакăн çинчен манаççĕ: комбайнсемпе ытти шултăра машинăсене мастерскойсенче юсаççĕ пулсан, транспорт инвентарĕсемпе ытти ĕç хатĕрĕсене колхозсемпе бригадăсенче пĕр вăхăтрах юсаса пыма пулать. Анчах районсенче те васкамаççĕ. Чкаловски районра, сăмахран, 966 урапаран 410 урапа юсамалла, вĕсенчен халлĕхе çуррине кăна юсанă-ха. Кĕлте ураписене 750 урапаран 425-шне çеç юсанă. Тĕштырă турттармаллисене 144 урапа юсамалла. Çак районрах Тутарла Сăкăтри «Правда» колхозра 105 лаша пуçне 42 урапа кăна. Вĕсене те чылай юсама лекет. Ытти инвентарьсем çинчен каламалли те çук. Вĕсем патне пырса та тĕкĕнмен. Çак ĕç хатĕрĕсене юсассине «вак-тĕвек» ĕç тесе шутлаççĕ пулсан, мĕншĕн-ха тата кунта 8 жнейкăран, 3 сенокосилкăран пĕрине те юсаман. Ку ĕнтĕ, çĕрĕç оргăнĕсенче каланă тăрăх, «чи малтан тумалли ĕç»! «Правда» колхозăн председателĕ Насыбуллин юлташ колхозра тимĕрç çук тесе ларать. Тимĕрç вăл хăй тĕллĕн ÿсекен япала мар, ăна малтанах хатĕрлес пулать. Çавăн пек тĕслĕхсемех куратпăр Чăваш-Сăкăтри «Красное знамя» колхозра та. Колхоз председателĕ Пирогов юлташ уборкăна хатĕрленес тĕлĕшпе халлĕхе нимĕн те туман темелле. Кунта юсамаллисем жнейкăсенчен пуçласа сÿсмен-хăмăт патне çитиччен чылай тупăнаççĕ.

Хуçалăха чăн-чăн хуçасем пек тытакан колхоз председателĕсемпе бригадирсем çав ĕçсене ытлашши шавламасăр куллен туса пыраççĕ. Çавăн пек Шăхасан районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозра урапасемпе ытти ĕç хатĕрĕсене бригадăсенче колхозниксем хăйсемех юсаççĕ. Çапла, Поляков юлташăн бригадинчи Н. Сидоровпа А. Кириллов колхозниксем кĕлте кÿме 2 урапа юсанă, вĕренсем явнă, кÿлмелли таврашсене юсаççĕ.

Ĕç хатĕрĕсене юхăнтарса яни пулмалла мар. Япалана çийĕнчех юсамалла, унсăрăн вăл ытларах та ытларах çĕмĕрĕлсе пырать, кайран пуçĕпех пăрахăçа тухать. Хуçалăха тĕплĕ алăпа тытса пыракан колхозсенче ĕç хатĕрĕсене çураки хыççăнах юсама, çĕнĕрен тума тытăнчĕç.

Кирек камшăн та паллă, япăх ĕç хатĕрĕпе ĕçлесен ĕçĕн тухăçлăхĕ те, пахалăхĕ та начар пулать. Кÿлмелли таврашсем, хăмăт е ĕнерчĕк япăххи лашана тепĕр чухне нумай вăхăтлăха стройран кăларать. Шăналăксемпе михĕсем, ещĕксем питĕ пулмасан, тырпул нумай тăккаланать.

Тырă вырма— юсавлă комбайнсемпе жнейкăсем, çава-çурласем, авăн çапма —молотилкăсем, çавăн пекех тăпачăсем те кирлĕ; кĕлте кÿме, тырă турттарма —лайăх урапасем, шăналăксем, михĕсем, ещĕксем кирлĕ. Урапа сĕрмелли çу та пысăк ыйту пулса тăрать. Ку япаласене пурне те вырăнтах тума май пур. Вырăнти промышленноçăн халăх комиссариачĕн тивĕçлĕ предприятийĕсем те, ытти наркоматсен предприятийĕсем те колхозсене урапа сĕрмелли çу парас енĕпе мĕн кирлине пурне те тума пултараççĕ.

Кÿлмелли таврашсем, вĕрен-пăявсем, кĕреплесемпе йывăç кĕреçесем, шăпăрсемпе çулăксем пурне те пĕр вак-тĕвек япала юлмиччен хатĕрлесе çитермелле.

Уборкăпа пĕрлех кĕраки те килет. Çавăнпа та инвентарьсене уборкăна çеç мар, кĕракине те хатĕрлемелле. Хăшпĕр çĕрте халĕ плугсемпе сеялкăсене çумăр айĕнче лартса тутăхтараççĕ. Ку вăл пулмалла мар.

Партипе советăн вырăнти оргăнĕсен, çĕрĕç оргăнĕсен транспорт инвентарĕсемпе ытти «вак-тĕвек» ĕç хатĕрĕсене юсассине иккĕмĕш черете хăварма юрамасть, пурне те вĕсене пĕр вăхăтрах-МТС мастерскойĕнче, колхозăн тимĕрçлаççинче, бригадăра туса пыма пулать.

Çуракинче нумай вăй хурса ĕçлени сая ан кайтăр тесен, вăрçă вăхăтĕнчи тырпула пĕр тăккаламасăр пухса кĕртес тесен, уборкăна вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек хатĕрленсе кĕтсе илмелле. Колхозсемпе бригадăсен, колхозниксемпе колхозницăсен социализмлă ăмăртăвне çак енĕпе татах та ытларах вăйлатмалла.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июнĕн 28-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Июнĕн 28-мĕшĕнче фронтăн Курск енĕнче наступлени тума тытăннă нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç çапăçусем пуçланса кайнă.

Фронтăн Севастополь участокĕнче пирĕн войскăсем противникăн атакисене сире-сире янă.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле паллă улшăнусемех те пулман.

Иртнĕ эрнере, июнĕн 21-мĕшĕнчен пуçласа 27-мĕшне çитиччен, сывлăшри çапăçусенче противникăн аэродромĕсем çинче тата зенитнăй артиллери пенипе нимĕçсен 384 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн çав вăхăт хушшинче 171 самолет пĕтнĕ.

* * *

Июнĕн 27-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 44 танкне, 2 бронемашинине, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 275 автомашинине, 7 трактор-тягачне, горючи тултарнă 3 автоцистернине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, артиллерин 10 батарейине пусарса лартнă, горючи склачĕпе боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă, чугунçул çинчи состава çĕмĕрнĕ, противникăн пехотине икĕ батальона çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Севастополе геройла хÿтĕлекенсем противникăн хаяр атакисене сире-сире яраççĕ. Жидилов юлташ командир пулса ертсе пыракан боецсем 3 кун хушшинче противникăн 16 атакине сирсе янă, нимĕçсен 7 танкне, минометсен 2 батарейине прислуги мĕнĕпех пĕтерсе тăкнă, бензохранилищĕне сирпĕнтерсе янă тата нимĕçсен пехотин пĕр батальонне аркатса тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур. Ĕнер артиллерирен хăватлăн персе тата сывлăшран тапăнса вăйлăн хатĕрленнĕ хыççăн, противникăн пысăк вăйĕсем наступлени тума тытăннă. Гитлеровецсем пĕр участокра кăна пирĕн чаçа кăштах каялла чактарма пултарнă. Ытти участоксенче пуринче те противникăн атакисене сире-сире янă, противника питех те пысăк çухатусем тÿстернĕ.

* * *

Сурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче нимĕçсем наступлени пуçласа янă. Артиллери хÿтĕлесе тăнипе вĕсем пирĕн оборонăн районне кĕрсе кайма пултарнă. Анчах та пирĕн автоматчиксем хăюллăн контратака туса противника вăл йышăнма ĕлкĕрнĕ позицисенчен хĕссе кăларнă. Трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Июнĕн 26-мĕшĕнче нимĕçсен авиацийĕ Ленинград фронтĕнче пирĕн çар объекчĕсенчен пĕрин çине вĕçсе тухма хăтланнă. Нимĕçсен 68 бомбардировщикĕпе истребителĕ çав объект çинелле тĕрлĕ енчен виçĕ эшелонпа вĕçсе пынă. Объект патне çывхарнă чухне нимĕç самолечĕсене хирĕç пирĕн летчиксем çапăçăва кĕрсе кайнă тата зенитнăй артиллери пеме пуçланă. Сывлăшри çапăçура тата зенитнăй артиллерин вучĕпе нимĕçсен 16 самолетне персе ÿкернĕ. Пирĕн пĕр самолет пĕтнĕ.

* * *

Минометчиксем — Коврижных, Генералов тата Яшин юлташсем 10 кун хушшинче 7 блиндаж çĕмĕрнĕ тата нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 300 çынна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Пирĕн 10 разведчик старши лейтенант Минц ертсе пынипе çĕрле противникăн тылне кĕрсе кайнă. Разведчиксем тăшман блиндажĕсем çине гранатăсем вăркăнтарнă, 17 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Пĕр нимĕçе тыткăна илсе, боецсем хăйсен чаçне тавăрăннă.

* * *

Орел облаçĕнчи партизансем фашистла захватчиксене канлĕх памаççĕ. Нимĕç войскисен тылĕнче пĕрре пĕр пунктра, тепре тепĕр пунктра çапăçусем пулса иртеççĕ. Çав çапăçусенче гитлеровецсем яланах пысăк çухатусем тÿсеççĕ. Т. районĕнче пулса иртнĕ 6 кун хушшинчи çапăçусенче партизансем 400 оккупанта пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ. В. районĕнче противник пехотин батальонĕ партизансен темиçе отрядне атакăланă. Партизансем тăшмана хирĕç çирĕппĕн тăнă, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нимĕçсен 163-мĕш пехотнăй дивизийĕнчен тыткăна лекнĕ салтак Вильгельм Н. çапла каласа панă: «Пире, ватăла пуçланă çынсене, фронта янă чухне çапла каларĕç: эсир тылра, обозсенче, пулăшкаласа тăракан тĕрлĕ командăсенче пулатăр, терĕç. Офицерĕсем çапла ĕнентерсе калатчĕç: вăрçмашкăн пулсан çамрăксенчен уйрăм дивизисем тунă, тетчĕç. Анчах та чаçа çитсе ĕлкĕрнĕ-ĕлкĕрменех пире çапăçăва кĕртсе ячĕç. Кивĕ салтаксене те улталарĕç. Вĕсене хĕлĕпех—сире улăштаратпăр, тесе тăчĕç, анчах та халĕ каллех вилĕм ăшне хăваласа кĕртрĕç. Вĕсен паттăрлăхĕ пĕтнĕ ĕнтĕ. Эпĕ тыткăна парăнма ĕмĕтленекен нумай салтаксене пĕлетĕп, анчах вĕсем офицерсенчен хăраса тăраççĕ. Германире кашни çынна уйрăммăн сыхласа лартнă. Кашни çын хыççăн гестаповецсем, эсэсовецсем тата штурмовиксем сыхласа çÿреççĕ. Халĕ пирĕн халăх хушшинче çакăн пек пословица çÿрет: «Хăвăн кĕсйÿне пăх та унта Гиммлер хăлхисем ларнине курăн».

* * *

Пирĕн зенитчиксем нимĕçсен хăйне уйрăм ĕç тăвакан отрячĕн инçе вĕçсе кайса разведка тăвакан самолетне персе ÿкернĕ. Самолетăн экипажне тыткăна илнĕ. Летчик-лейтенант Фриц Трайфель çапла каласа панă: «Эпĕ авиацире ĕçлеме пуçлани 6 çул ĕнтĕ. Российăна 1942 çулти июнĕн 13-мĕшĕнче Бельгирен килтĕм. Хĕвелтухăç фронтĕнчи малтанхи вĕçевех манăн телее татса пăрахрĕ. Фронт линийĕ урлă вĕçсе каçсанах, аялалла анса пĕлĕтсем хушшинчен тухнă-тухманах пирĕн çине вырăссен зенитнăй артиллерийĕ пеме тытăнчĕ. Икĕ снаряд самолета пырса тиврĕ. Пирĕн ирĕксĕрех анса лармалла пулчĕ. Вырăс зенитчикĕсем питех те тĕл переççĕ тенине эпĕ унччен те илтнĕччĕ. Халĕ ĕнтĕ çавна хамăн курса тÿссе ĕненмелле пулчĕ».

Июнĕн 29-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Июнĕн 29-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Курск тата Севастополь енĕсенче пирĕн войскăсем противника хирĕç çапăçнă. Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле улшăнусем те пулман.

* * *

Севастополе хÿтĕлекен чаплă çынсем нимĕçсен фашистла войскисен атакисене калама çук пысăк хастарлăхпа сире-сире яраççĕ. Участоксенчен пĕринче старши лейтенантăн Шишляевăн батарейинчи боецсем противникăн хăйсене çавăрса илнĕ пехотипе автоматчикĕсене хирĕç темиçе кун хушши ĕнтĕ вăйлăн çапăçаççĕ. Нимĕçсем унти рубежа тытса илме хăтланнисем пурте черноморецсен çивĕчлĕхĕпе хастарлăхне пула пăчлана-пăчлана лараççĕ.

Гордиенко командирăн дзотĕнчи гарнизон, противник артиллерирен талăкĕпе пĕр чарăнмасăр персе тăнине пăхмасăр, гитлеровецсен хаяр атакисене сире-сире пăрахнă. Захарян, Рябов, Алиев, Малышенко юлташсем тата гарнизонри ытти боецсем нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 300 çынна ытла пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра 2-мĕш рангри капитан Шацкий юлташ ертсе пыракан пирĕн автоматчиксен взвочĕ хаяр тытăçура 200 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче нимĕçсем Усолин юлташ командир пулса тăракан стрелковăй подразделени хÿтĕлекен рубежа йышăнса илме темиçе хут та хăтланса пăхнă. Пирĕн боецсем противникăн атакисене сире-сире янă, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград фрончĕн уйрăм участокĕсенче пирĕн чаçсем икĕ кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсенне 250 салтакпа офицера, 10 станковăй пулемет, 2 оруди пĕтерсе тăкнă, йывăçпа çĕртен тунă 11 огневой точкăна çĕмĕрнĕ. Пирĕн артиллери минометсен пĕр батарейине тата артиллерин 9 батарейине пусарса лартнă.

* * *

Старши лейтенант Годин командир пулса ертсе пыракан танкистсем нимĕçсен 11 танкне çĕмĕрнĕ тата 14 автомашинăна вĕсенче ларса пынă 120 салтакпа пĕрлех пĕтерсе тăкнă.

* * *

Белорусси районĕсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен Д. юлташ ертсе пыракан отрячĕ тунă операцисем çинчен хыпар илнĕ. Партизансен ушкăнĕ, çăмăл пулеметсемпе, çунакан шĕвек тултарнă бутылкăсемпе тата взрывчаткăпа хĕçпăшалланнăскер, Г. вырăнта нимĕçсен склачĕпе нефтебази патне вăрттăн пырса тухнă. Хурала пĕтерсе тăкса, партизансем противникăн 3 складне вут тĕртсе çунтарнă, тулашĕнчи виçĕ бака тата çĕр айĕнчи 3 бака сирпĕнтерсе янă, çав баксенче 700 тонна ытла бензин пулнă.

* * *

Нимĕçсен 22-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи снабжени ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Карл Бреннер çапла каласа панă: «Севастополь патĕнче пирĕн войскăсем питех те пысăк çухатусем тÿсеççĕ. Аманнă салтаксене тиенĕ автомашинăсем Симферополе вĕçĕ-хĕрри сĕрех каяççĕ. Хулара çĕнĕрен 25 госпиталь уçнă. Анчах та вĕсем аманнă салтаксемпе тулса ларнă ĕнтĕ».

* * *

Нимĕçсен 246-мĕш запаснăй батальонĕнчен тыткăна лекнĕ ефрейтор Карл Цигельмюллер çапла каласа панă: «Пирĕн батальонри салтаксенчен 60 проценчĕ ытла—вăл 40 çулти тата унтан та ватăрах çынсем. Вĕсем вăрçасшăн мар. Салтаксем пĕр-пĕринпе çакăн пек калаçнине эпĕ час-часах илткеленĕ: «Ку вăрçă мĕнле тата мĕнпе пĕтесси пирĕншĕн пурпĕрех. Часрах пĕттĕрччĕ кăна, унсăрăн эпир кунта пурте вилсе пĕтетпĕр».

* * *

Партизан П. юлташ, Ленинград облаçĕнчи нимĕçсем оккупациленĕ Остров хулине кайса килнĕскер, çапла каласа панă: «Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем хулара тата хула таврашĕнчи ялсенчи мирлĕ çынсене куллен темиçе çынна персе вĕлереççĕ. Эпĕ çав Островра пулнă кунсенче нимĕçсем çитĕннĕ 6 çынна тата Федоровски ялсоветĕнчи пĕр ачана çакса вĕлернĕ. Çак ачана вĕсем вăл хирте пухнă хĕçпăшала ăçта пытарса хунине каламаншăн вĕлернĕ. Туллимар вăтам шкулти учительницăна Цветкова юлташа бандитсем вăл хăйĕн упăшки ăçта пурăннине каламншăн кăна персе вĕлернĕ».

* * *

Германин çар промышленноçĕнче ĕç тухăçлăхĕ çавтери хытă чакса пырать. Берлинри авиаци завочĕсенче май уйăхĕнче самолетсем апрель уйăхĕнче туса кăларнинчен 10—15 процент сахалтарах туса кăларнă. Юлашки вăхăтра квалификациллĕ рабочисене çара мобилизациленипе çар промышленноçĕн продукцийĕ татах та чакнă.

СЕВАСТОПОЛЕ ХУТЕЛЕКЕН ГЕРОЙСЕМ. Укерчĕк çинче: паллă снайпер Людмила Михайловна Павличенко. Вăл вăрçă пуçланиччченех Осоавиахим организациленĕ снайперсен шкулĕнчен вĕренсе тухнă. Гитлеровецсене хирĕç Одесса патĕнчи çапăçусенче вăрçма тытăннă. Хăюллă патриотка фашистсен офицерĕсемпе салтакĕсене çĕр çынна ытла вĕлернĕ.

И. ОЗЕРСКИЙ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Государствăна тырă параççĕ

ЭЛĔК. Государство умĕнчи обязательствăсене срокчен парса татни — фронта пулăшни пулать. Кăна районри колхозниксем лайăх курса тăраççĕ, государствăна срокченех тырă пама тăрăшаççĕ.

Çак кунсенче Кармалти «Комсомолец» колхоз Заготзерно пунктне 55 центнер ытла, Еренарти «Самолет» колхоз 14 центнер ытла, Витеçутĕнчи «Шуçăм» колхоз 6 центнер ытла тĕштырă леçсе панă.

М. КУСТИКОВ.

* * *

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Исаково ялсоветĕнчи колхозсем государствăна 1942 çулхи обязательствăсем шучĕпе пур йышши тырăсене те срокчен парса татма йышăннă. Паянхи куна «Красная звезда» колхоз государствăна 30 центнер, «Красный пахарь» колхоз 27 центнер тĕштырă леçсе панă.

И. АРХИПОВ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре пысăк тухăçлăхпа тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн, ВКП(б) райкомĕсемпе ĕççынни депутачĕсен районсенчи Советсен исполкомĕсем тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине кĕртнĕ:

136. **Е. И. Куракова**—«Красное Знамя» колхозри свинарка. Куракова юлташ 1941 çулта 8 ама-сыснаран 87 пуç сысна çури илсе пăхса ÿстернĕ, пĕрне те вилме паман. 1942 çулта Куракова юлташ 9 ама-сыснаран [illegible] пуç сысна çури илнĕ те пурне те пăхса ÿстернĕ, пĕрне те вилме паман.

137. **М. М. Махмутова** — «Звезда» колхозри телятница. Махмутова юлташ телятница пулса 1936 çултанпа ĕçлет. Вăл çулсеренех çуралнă пăрусене пурне те чипер пăхса ÿстерет, пĕрне те вилме памасть. 1942 çулта вăл пăхакан ĕнесем 40 пăру пăруласа панă. Махмутова юлташ çавсене пĕрне те вилме паман, пурне те лайăх пăхса ÿстерет.

138. **Сергей Матвеевич Соловьев**—Сĕнтĕр районĕнчи «Красное Сормово» колхозăн фермисен заведующийĕ. Соловьев юлташ фермăсен заведующийĕ пулса 1936-мĕш çултанпа ĕçлет. 1941 çулта колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пур йышши выльăх-чĕрлĕх тĕлĕшпе те 100 процент е ытларах та тултарнă. Çавăншăн выльăх-чĕрлĕх пăхса ÿстерес тĕлĕшпе ĕçлекенсене пурне те тата Соловьев юлташа хăйне те ĕçкунĕсем хушса панă. Пĕр 1941 çула кăна илсе шутласан та, колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçрен 100 пин тенкĕ доход укçан илнĕ, сметăра 95 пин тенкĕ палăртса хунă пулнă.

139. **Зоя Порфирьевна Порфирьева**—Сĕнтĕр районĕнчи «Красное Сормово» колхозри свинарка. 1941 çулта Порфирьева юлташ хăй пăхакан сыснасенчен планра кăтартнă 77 сысна çури вырăнне 118 сысна çури илнĕ, вĕсене пурне те лайăх пăхса ÿстернĕ, пĕрне те вилме паман. Порфирьева юлташ пăхса ÿстерекен сысна çурисем 2 уйăхран чĕрĕлле 14,4 килограмм туртнă. Порфирьева юлташа ĕçшĕн хушса тÿлес шутпа 10 сысна çури панă.

140. **Ксения Григорьевна Григорьева**— Сĕнтĕр районĕнчи «Красное Сормово» колхозри телятница. 1941 çулта Григорьева юлташ ĕнесенчен 28 пăру илсе вĕсене пурне те пăхса ÿстернĕ. В[illegible] шутласан, Григорьева пăхса ÿстерекен пăрусем кунсеренех 700 [illegible] хушăнса пынă. Григорьева юлташа ĕçшĕн хушса тÿлес шутпа 1[illegible] литр сĕт тата 36 килограмм какай панă.

Чехословакин нациллĕ оборона министрĕ Ингр генерал Совет Союзне килни

Июнĕн 28-мĕшĕнче Куйбышев хулине Чехословаки республикин нациллĕ оборона министрĕ Ингр генерал килнĕ.

Аэродром çинче Ингр генерала çаксем кĕтсе илнĕ: Оборона Халăх Комиссариачĕн тулашри çыхăнусен отделĕн начальникĕ В. Н. Евстигнеев юлташ, Куйбышев Хула Совечĕн председателĕ П. П. Волков юлташ, Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн Протокольнăй отделĕн заведующийĕ Ф. Ф. Молочков юлташ, Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн Европăри ĕçсене пăхса тăракан 4-мĕш отделĕн заведующийĕ Н. В. Новиков юлташ, Куйбышев хулинчи гарнизонăн начальникĕ полковник Н. А. Федоров юлташ, çавăн пекех тата Чехословаки республикин миссийĕ Чехословаки посланникĕпе, г. Фирлингерпа пĕрле, Югослави посланникĕ г. Симич, Греци ĕçĕсен поверенăйĕ г. Джирас, Польша посольствин советникĕ г. Сокольницкий тата ыттисем те.

Кĕтсе илнĕ çĕрте хисеплĕ хурал тăнă.

Чехословакин нациллĕ оборона министрне Ингр генерала А. Я. Вышинский юлташ йышăнни

Июнĕн 27-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕн заместителĕ, Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн заместителĕ А. Я. Вышинский юлташ Чехословаки республикин нациллĕ оборона министрне Ингр генерала йышăннă, Ингр генералпа пĕрле Чехословаки посланникĕ г. Фирлингер тата Чехословакин Совет Союзĕнчи çар миссийĕн начальникĕ полковник г. Пика пулнă.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Обкомĕнче

Государствăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планне ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕшĕн Элĕк районне куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялав панă

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ Элĕк районне 1941 çулта государствăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планне ирттерсе тултарнăшăн тата çамрăк выльăхсене сыхласа хăварас, колхозсенчи выльăх-чĕрлĕхсен йышне ÿстерес тĕлĕшпе государствăн 1942 çулти планне пурнăçа кĕртнĕ çĕрте лайăх тĕслĕхсем кăтартнăшăн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялав памалла тунă.

Элĕк райсовечĕн исполкомĕпе ВКП(б) Элĕк райкомне 1942 çулта государствăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли, çамрăк выльăхсене сыхласа хăвармалли тата колхозсенче выльăхсен йышне ÿстермелли планне ăнăçлăн та срокчен пурнăçа кĕртессишĕн районри колхозниксем хушшинче социализмлă ăмăрту сарса яма хушнă.

Воскресникре

КУСЛАВККА. Июнĕн 28-мĕшĕнче, канмалли кун, районри ĕççыннисем чугунçул çине ĕçлеме тухрĕç. Пурĕ 4 участокра ĕçленĕ. Ĕçе йĕркелесе пыма ВКП(б) райкомĕ кашни участокках уйрăм çынсене уйăрнă. Уйăрнă çынсем — Устинов, Осипов, Семенов, Евсеев юлташсем — кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче ĕçлекенсене отечественнăй аслă вăрçăн çулталăкри итогĕсем çинчен каласа кăтартнă.

Воскреснике тухнă 300 çын чугунçул çинчи шпалсене, рельссене юсанă, хăйăр сапса тухнă. Каганович, Тельман ячĕсемпе тăракан колхозсем аван ĕçленĕ. Тельман ячĕпе тăракан колхозăн членĕ В. Курскова тата «Ударник» колхоз колхозници А. Бурзакова юлташсем лайăх тĕслĕхсем кăтартнă.

Чашлама участокĕнче «Новый путь» тата «Ударник» колхозсенчи колхозниксем 45 çын ĕçленĕ. Вĕсене Евсеев юлташ ертсе пынă. Канмалли кун вĕсем 2 километр хушшинчи чугунçул çине хăйăр тăкса тухнă, 280 метр хушши шпалсемпе рельссене юсанă. Ĕçлесе илнĕ укçана Ленинградри чугунçул çинче ĕçлекенсене пулăшма панă.

Н. ЛЬВОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

* * *

Ишлей районĕнче вырсарникун чугунçул çине ĕçлеме 288 çын тухнă. Вĕсем ирхине 9 сехетрен пуçласа каçхине 5 сехетчен ĕçленĕ: шпалсене, рельссене юсанă, канавсем чавнă, кÿлленсе тăракан шывсене уçа-уça янă, чугунçул хĕррисене хырса сĕвеклетнĕ.

Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз членĕсем ĕçе организованно тухрĕç. Хăйсем уйăрса илнĕ участока ĕçлесе пĕтермесĕр ĕçрен кĕмерĕç. Вĕсене колхоз бригадирĕ Павлова юлташ ертсе пычĕ.

«Социализм» колхозран воскреснике 21 çын пынă. Вĕсем те шпалсене юсанă çĕрте аван ĕçлерĕç.

В. АНДРЕЕВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Севастополе геройла хӳтĕлени

СЕВАСТОПОЛЬ, июнĕн 26-мĕш. («Правда» хаçатăн спецкорреспонденчĕ). Енерпе паян Севастополь патĕнче çапăçусем пĕтĕм фронт талккишĕпех пулса пычĕç. Çурçĕр-Хĕвеланăç енчи тĕп участокра противник, питех те пысăк çухатусем тӳссе, пирĕн оборона линийĕ çине са вăлланса кĕме пултарнă. Совет воинĕсем вăйлăн пырса çапса, тăшмана хĕссе кăларнă. Ытти енсенчи нумай атакăсене те пирĕн боецсем ăнăçлăн сире-сире пăрахаççĕ.

Противник çĕнĕрен çĕнĕ резервсем илсе пырать. Юлашки кунсенче çĕнĕрен темиçе пехотнăй полк пырса çитнине палăртнă. Çав полксем нимĕçсен Севастополь çине наступлени тума пуçлас умĕн пухса тăратнă дивизисене кĕмесçĕ. Вăл чăсем ытти фронтсенчен куçарса килнĕ чăсем пулмалла.

Нимĕçсем çавтери пысăк çухатусем тӳсеççĕ. Юлашки кунсенче нимĕçсем атакăна малтанхи пек полксемпе дивизисене кĕртсе яманнине çакăнпа ăнлантарса памалла та ĕнтĕ. Вĕсем халĕ уйрăм ротăсемпе, батальонсемпе кăна атакăлаççĕ.

Халĕ ĕнтĕ, противник виççĕмĕш наступлени пуçланăранпа 20 кун иртнĕ хыççăн, Севастополь гарнизонĕн героизмĕ мĕнтери пысăкки, вăл иксĕлми çирĕп тăни тата хăйĕн ĕçне пĕтĕм чунчĕререн парăнни татах та уççăнрах куç умне тухса тăрать. Севастополе хӳтĕлекенсен халиччен пулман паттăрлăхĕ кунран кун ӳссе пырать.

Чернышев юлташ командир пулса ертсе пыракан подразделени 10 кун хушшинче тăшманăн 50 атакине яхăн сире-сире пăрахнă. Боецсем нимĕçсене хирĕç час-часах штык вĕççĕн тăрса çапăçăва кĕрсе каяççĕ. Пĕр атака вăхăтĕнче нимĕçсем пирĕн подразделенин окопĕсене пырса кĕнĕ. Кунта вĕсене пирĕн боецсем штыксемпе тата прикладсемпе кĕтсе илнĕ. Хаяр çапăçу пуçланса кайнă. Гитлеровецсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă, ыттисем тарса хăтăлнă.

Пулемет расчечĕн командирĕ пĕрремĕш статьяри старшина Бельтиков юлташ хĕссе килекен фашистсене тӳрремĕнех пере-пере пăрахнă. Тăшмансем пĕрин хыççăн тепри çĕр çине тĕшĕрлетĕшĕрле аннă. Тăшманăн снарячĕ тӳррĕн пырса лекнипе Бельтиковăн пулемечĕ çĕмĕрĕлнĕ. Хăюллă моряк çухалса кайман. Стрелковăй отделени патне хăвăрттăн шăвăнса пырса, вăл ручной пулемет ярса тытнă та фашистсем çине пĕтерсе тăкмаллах пеме тытăннă. Çав кун пулеметчик Бельтиков фашистла мерзавецсене 200 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ.

Краснофлотец писарь Гудименко çапăçура питех те паттăрла ĕç тунă. Противник Безымянная высотана атакăланă чухне пирĕн позицисене тытса илес хăрушлăх тухса тăнă. Гудименко 26 боеца пухнă та вĕсемпе пĕрле тăшмана хирĕç штык вĕççĕн çапăçăва кĕрсе кайнă. Çиçĕмле пырса çапнине тӳссе тăраймасăр фашистсем каялла чакнă, çапăçу хирĕнче вуншар фашист вилсе юлнă.

(«Правда», июнĕн 27-мĕш.)

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Хĕвеланăç фрончĕ). **Укерчĕк çинче:** Кузьмин юлташ командир пулса ертсе пыракан чаçри гвардеец-автоматчиксем гитлеровецсенчен чугунçулăн пĕр участокне туртса илеççĕ.

Д. ЧЕРНОВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Фашистсем Украинăра алхасни

Фронт линийĕ урлă каçса килнĕ совет гражданĕсем каласа панă тăрăх, Сумы облаçĕнчи Середино Будски районĕнри Большая Березка ялĕнче çак кунсенче гитлерла çынçиенсен банди пĕр кун хушшинчех 62 çынна вĕлернĕ. Вĕсене вĕлерес умĕн фашистсем вĕсен куçĕсене тĕксе шăтарнă, çăмсисене касса татнă.

Ашшĕ-амăшĕсен куçĕ умĕнчех вĕсен пулăшу ыйтакан ачисене гитлеровецсем штыкпа чике-чике вĕлернĕ, çакăн хыççăн вĕсене вутта пăрахса çунтарнă. Пĕр ултă çулхи хĕрача фашистла палачсенчен тарма хăтланнă. Ăна офицер хăвалама тытăннă, ун çине пăшалран пенĕ. Хĕрача çурт тавра икĕ хут чупса çавăрăнма ĕлкĕрнĕ. Çак вăхăтра ăна хирĕç тепĕр офицерĕ чупса тухнă та тӳрех персе вĕлернĕ.

Ĕлĕк чечекленселарнă Бердянск хулинче нимĕç автоматчикĕсем совет активисчĕсен çемьисен членĕсене 800 çынна ытла персе пăрахнă.

Украинăн оккупациленĕ районĕсенче пур çĕрте те выçлăх тăрать. Нимĕçсем продуктсемпе выльăх-чĕрлĕхсене пурне те Германие турттарса каяççĕ. Чернигов облаçĕнчи Гремячски районран май уйăхĕн темиçе кунĕнче кăна нимĕçсем 1.900 пуç выльăх-чĕрлĕх туртса илсе кайнă. Кунта халĕ ĕнтĕ пĕр ĕне те юлман.

КĂНТĂР ФРОНЧĔ. (ТАСС).

Предприятисемпе артельсенчи социализмлă ăмăрту

Хĕрарăмсене ĕçе вĕрентетпĕр

Шупашкарти тир-сăран комбиначĕн коллективĕ, Пĕтĕм Союзри ăмăртăва хутшăнса, 1943 çулччен 20 хĕрарăма тир-сăран ĕçне вĕрентме обязательство илчĕ. Комбинатра хĕрарăмсене çак ĕçе ку таранччен те вĕрентнĕ. Нумаях пулмасть Андреева юлташ уборщица пулса ĕçлетчĕ. Ăна мастерсем çумне çирĕплетсе, штамповщица профессине вĕрентрĕмĕр те, халĕ вăл çак ĕçре нормăна 200 процент ытла тултарать. Çавăн пекех çĕнĕ профессие вĕреннĕ М. Чижова А. Алексеева юлташсем те сăрансене касса якатас ĕçе нормăпа палăртнинчен 1,5 хут ытларах тăваççĕ.

Тир-сăран тăвас ĕçре ĕлĕк чухне хĕрарăмсем ĕçлемен пулнă. Кăçал эпир хĕрарăмсене чылай вĕрентрĕмĕр. Вĕсенчен Токарева, Хохлова юлташсем халĕ хăйсен нормисене 150-шар процент тултараççĕ.

Опытлă рабочисем уйрăмах тухăçлăн ĕçлеççĕ. Тир-сăран хатĕрлекен цехри Терентьева, Шайбина, Фадеева юлташсем нормăна тăтăшах 200 процент таран тултараççĕ. Ку цехра нормăна тултармасăр ĕçлекенсем пĕрре те çук.

И. СМИРНОВ.
Комбинатри парторганизацин секретарĕ.

ÇАМРĂК ТОКАРЬ ИВАН ДЕМЬЯНКОВ

Пĕтĕм Союзри ăмăртăва хутшăннă хыççăн инструментальнăй цехри çамрăк токарь-комсомолец Иван Демьянков кашни сменăрах икшер норма тултарса пынă. Çапах та ăна çакă нимĕн чухлĕ те лăплантарман. Вăл, заводри чаплă фрезеровщик Осипов пек, пĕччен 5—6 çыншăн ĕçлессишĕн çуннă.

Çак ĕмĕтпе Демьянков юлташ пĕррехинче цеха гудокченех пынă. Унăн пичĕ çинче хаваслăх çиççе тăнă. Икĕ станок çинче ĕçлеме ирĕк панăшăн савăннă вăл. Çав вăхăтрах хумханнă та: унăн питех те ответлă продукци туса кăлармалла-çке. Метчиксем çинче миллиметрăн икĕ çĕрĕмĕш пайне виçсе паллă тăвасси çăмăлах мар. Пĕр вăхăтрах икĕ станокпа ĕçленĕ пирки ку ĕç татах та йывăрланать. Çавăнпа вăл чи малтанах касакан инструментсем мĕнле ĕçленине тĕрĕсленĕ, вĕсене ĕç условийĕсем ыйтнă пек вырнаçтарса тухнă. Унтан виççекен инструментсемпе станоксене хатĕрленĕ. Пĕр станокне метчиксене хăйраса якатмалла туса, тепĕрне — метчиксем çинче пĕчĕк йĕрсем касмалла туса лартнă.

Çак ĕççене пĕтерсен гудок пулнă. Икĕ станок пĕр харăс ĕçлеме тытăннă. Çамрăк токарь вĕсем çине пăхса тăнă. Вăл халĕ хăйне çапăçу хирĕнчи командир пек туйнă.

...Кăнтăрлахи апат. Смена мастерĕ Петр Сергеевич çамрăк токарь ĕçне пута илнĕ.

—Демьянков юлташ, — тенĕ Петр Сергеевич, — сирĕн 200 процент.

П. НИКОЛАЕВ.

КАНАШ, ВРЗ.

ЮТ ÇĔРШЫВСЕНЧЕ

Черчилль Рузвельтпа калаçни çинчен пĕлтерни

Вашингтонра 7 кун ытла пурăннă хыççăн Англин премьер-министрĕ Черчилль Лондона таврăннă. Вăл Америкăран тухса каяс умĕн Черчилльпе Рузвельт пĕрле калаçнин результачĕсем çинчен официальнăй йĕркепе пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă.

— Пĕрлешнĕ нацисем çак вăрçăра çĕнтермелли плансем тĕлĕшпе пĕр-пĕринпе халиччен нихăçан та хальхи пек чĕререн тата тĕплĕн калаçса татăлманччĕ-ха, — тенĕ çав пĕлтерӳре. — Вырăссем хăйсене Германия чи вăйлăн пырса çапнине хирĕç тăнипе эпир тивĕçлипе шута илетпĕр тата ăна хĕрӳллĕн саламлатпăр, эпир тата Китай çарĕ чаплăн хирĕç тăнипе хавасланатпăр. Японие хирĕç Китайăн лару-тăрăвне çăмăллатас тесе те йышăнмалли мерăсем çинчен пирĕн çар советникĕсем тĕплĕн калаçнă.

Паллах ĕнтĕ, пирĕн плансене сарса кăтартма май çук, çапах та çакна калама пулать: Вашингтонра эпĕ Рузвельтпа калаçнă чухне тата пирĕн çар советникĕсем пĕрле калаçнă чухне тĕплĕн сӳтсе явнă операцисем Германин вăйĕсене Россия çине наступлени тăвассинчен каялла туртса илĕç, — тенĕ. (ТАСС).

Сенат комиссийĕ вăрçă ĕçĕсем валли укçа питĕ нумай уйăрса парассине ырланă

ВАШИНГТОН, июнĕн 28-мĕш. (ТАСС). Сенатăн укçа уйăрса парас ĕçсене тăвакан комиссийĕ вăрçă ĕçĕсем валли 42.823 миллион доллар укçа уйăрса памалли çинчен калакан закона пĕр саслăн ырланă. Маларах çав законопроекта представительсен палати пĕр саслăн ырланă пулнă.

Америкăн сывлăш-çар вăйĕсен чаçĕсем Англие çитни

Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англие Америкăн сывлăш-çар вăйĕсен пысăк контингенчĕсем пырса çитнĕ. Халĕ вĕсем вăрттăн базăра çак çитес кунсенчех Англин сывлăш-çар вăйĕсемпе пĕрле Германи çине массăллăн тапăнса бомбăсем пăрахма хатĕрленеççĕ.

«Таймс» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Америкăн сывлăш-çар вăйĕсем хăйсене уйрăм чаçсем пулса çапăçмалла тунă, анчах та вĕсем Англи вăйĕсемпе таччăн çыхăнса ĕçлемелле.

Канада войскисем Англие пырса çитни

ЛОНДОН, июнĕн 26-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Канада войскисене тиенĕ суднăсен çĕнĕ караванĕ Англие çитнĕ. Канада войскисем хушшинче пехота, артиллери, медицина чаçĕсем тата çарсене пулăшакан чаçсем пур.

ЛĂПКĂ ОКЕАН ÇИНЧИ ÇАР СОВЕЧĔН ВАШИНГТОНРА ПУЛНĂ ЛАРĂВĔ

ЛОНДОН, июнĕн 26-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Лăпкă океан çинчи çар совечĕн ятарласа пухнă ларăвĕ пулса иртнĕ. Лару хыççăн Çĕнĕ Зеландин США-ри посланникĕ Нэш çапла пĕлтернĕ: «США президенчĕ Рузвельт тата Черчилль пĕрле решени йышăннă, çав решени юлашкинчен пире эпир кĕтнĕ результатсем патне—пур фронтсенче те çĕнтерӳ тăвасси патне илсе çитерет», тенĕ.

Хĕвелтухăç Германири диверсиллĕ ĕçсем

СТОКГОЛЬМ, июнĕн 28-мĕш. (ТАСС). «Свенска Дагбладет» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, нумаях пулмасть Хĕвелтухăç Германире икĕ хутчен поездсен пысăк крушенийĕсем пулнă. Вилнисем те, аманнисем те пур. Пурлăх тĕлĕшĕнчен сиен питĕ пысăк пулнă. Йĕрлесе пăхнă тăрăх, крушенисем икĕ хутĕнче те диверсиллĕ ĕçсем тунă пирки пулнă.

Виши правителĕсем Францин суту-илӳ суднисене гитлеровецсен аллине параççĕ

ЛОНДОН, июнĕн 26-мĕш. (ТАСС). Информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Виши влаçĕсем тĕнĕл держависен аллине Францин суту-илӳ суднисене пурĕ пĕр миллион тоннăлăх ытла пани çинчен пĕлтернĕ пирки ыйтнине хирĕç Англин экономикăллă вăрçă министерствин парламентски секретарĕ Фут общинăсен палатинче çапла каланă: Францин 5 суднине тата союзниксен тепĕр 5 суднине Виши правительстви Германипе Итали аллине панă, тенĕ.

ФРАНЦИ РАБОЧИЙĔСЕНЕ ГИТЛЕРЛА ГЕРМАНИЕ ЧУРАЛЛА ĔÇЕ ЯРАÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 26-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» пĕлтернĕ тăрăх, Лаваль Франци рабочийĕсене 530 пин çынна Германие яма тата Франци заводĕсене Германи валли çар материалĕсем туса кăларассине ӳстерме сăмах панă. Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Францин рабочийĕсемпе предпринимателĕсем Лаваль Германие татах темиçе пин рабочи яма хăтланнине хирĕç саботаж тăваççĕ. Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ юлашки даннăйсем тăрăх, Германире халь 154.212 француз рабочийĕ ĕçлет, ку шута тыткăнри салтаксем кĕмеççĕ.

Англи авиацийĕ Бремен çине татах вĕççе пырса тапăннă

Июнĕн 28-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Бремен çине иккĕмĕш хут массăллăн вĕççе кайса тапăннă. Бомбăсем пăрахнă хыççăн Бременра вăйлă пушарсем тухнă.

Çавăн пекех тата истребительнăй авиацин самолечĕсем противникăн оккупациленĕ Францири аэродромĕсене тата ытти объекчĕсене те атакăланă.

(ТАСС).

ЧЕХОСЛОВАКИРИ ЮНЛА ТЕРРОР

ЖЕНЕВА, июнĕн 26-мĕш. (ТАСС). Прагăра официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: Хрудим округĕнчи Лещаки ялне пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă. Ялти мĕнпур çынсене асаплантарса вĕлернĕ. Çав ялти çынсем гитлерла çынвĕлерене Гейдриха вĕлерме тапăннă çынсене хăйсем патĕнче пытарнă имĕш.

Тата çапла пĕлтереççĕ: июнĕн 24-мĕшĕнче Прагăра 18 чеха, Брнора 12 чеха асаплантарса вĕлернĕ.

Польшăри гитлерла террор

СТОКГОЛЬМ, июнĕн 26-мĕш. (ТАСС). Çакă паллă пулса тăнă: Гейдриха вĕлерме тапăннă хыççăн виççĕмĕш кунне Польша çарĕн резервĕнче пулнă офицерсене пурне те çийĕнчех тытса хупнă та юлашки эрнесем хушшинче васкаса тунă концентрациллĕ лагерьсене янă. Темиçе хулара, çав шутра Гдыньăра та, запасри темиçе çĕр офицера, хăйсем Германие хирĕçле шухăшкăмăллă пулса тăнипе паллă пулса тăракансене, тĕрмесене янă, допрос тунă хыççăн вара вĕсене персе вĕлернĕ.

Силезире запасри 1.200 офицера та тĕрмене хупнă. Вĕсене çапла асăрхаттарса хунă: Польшăра пĕр-пĕр «эпизод» сиксе тухсан — сире пурне те персе пăрахатпăр тенĕ. Юлашки 14 кун хушшинче Силезипе Познаньре 170.000 поляк рабочие ирĕксĕр мобилизациленĕ. Вĕсене Германин тылне саперла чи йывăр ĕçсем тума яраççĕ.

Варшавăра нумаях пулмасть рабочисене çавăра-çавăра илсе тыта-тыта чарнă. Çав кун тытса чарнă 5.000 çынна (персе пăрахассипе хăратса товарнăй вагонсене лартнă та Германие ăсатнă.

Мохаммед Саеда Иранăн ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулма уйăрса лартни

ТЕГЕРАН, июнĕн 24-мĕш. (ТАСС). Иранăн СССР Союзĕнчи посолĕ пулнă Мохаммед Саеда ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулма уйăрса лартнă.

Июнĕн 22-мĕшĕнче, шах патне пырса курăнăçнă хыççăн, Саед министр ĕççесене тума тытăннă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Ĕçкунĕсен хисепĕпе пахалăхĕшĕн

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «Колхозниксем обязательнăй йĕркепе ĕçлесе тумалли ĕçкунĕсен минимумне ӳстересси çинчен» йышăннă постановлени тăрăх пирĕн республикăри колхозсенче кашни ĕçлеме пултаракан колхозникăн, колхозницăн июнĕн 15-мĕш тĕлне 30 ĕçкунĕ ĕçлесе илмелле пулнă. Халĕ, ĕçкунĕсен минимумне тултарассин пĕрремĕш срокĕ иртнĕ май, Калинински районри колхозсенче пухусем пулса иртеççĕ. Çав пухусенче колхозниксем партипе правительство йышăннă постановлени мĕнле пурнăçланса пынине тата хăйсен колхозĕнчи учет ĕçĕ епле пынине пăхса тухаççĕ.

Мачамăшри «Первомайский» колхозра çав ыйтусемпе пуху çак кунсенче пулса иртрĕ. Пухура чылай колхозниксем колхозри çитменлĕхсене витĕмлĕн палăртса хăварчĕç.

Иртнĕ çул «Первомайский» колхоз вăйлă тухăçлă тырпул туса илес тĕлĕшпе районра малти вырăнта тăнă. Вăтам шутпа кашни гектартан 18,47 центнер тĕштырă туса илнĕ. Колхозниксен ĕçлес хастарлăхĕ кăçал та пысăк, çакна тӳрĕ кăмăлпа ĕçлекен колхозниксен ĕçĕ уйрăмах лайăх кăтартса парать. Федор Степанов, Давид Быков, Алексей Степанов, Михаил Федотов тата ытти чылай колхозниксем кăçал 70—90-шар ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ те ĕнтĕ. Вĕсем колхоз производствинче куллен ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Анчах та колхоз правленийĕ ялхуçалăх ĕçĕсене сӳрĕккĕн ертсе пынине пула, пур колхозниксем те ĕçе кирлĕ пек хутшăнмаççĕ-ха. Куллен тăрăшса ĕçлекен колхозниксем хыçĕнче ĕçрен пăрăнса çӳрекен кахалсем хӳтĕленсе тăраççĕ. Çакă вăл йăлтах колхоз председателĕпе счетоводĕ хăйсем сӳрĕккĕн ĕçленинчен килет. Тĕслĕхрен, Мария Капитонова, Надежда Мартынова тата ытти чылай вăйпиттиколхозницăсем кăçал 10—12-шер ĕçкунĕ çеç тунă. Федосия Морозова мĕнпурĕ те 2,19 ĕçкунĕ çеç тунă.

«Первомайский» колхозра час-часах çапла килсе тухать. Бригадирсем ирхине ĕç нарядĕсем ыйтма пырсан, колхоз председателĕ, малашнехи ĕçсене курса тăма юратмасăр, вĕсене «паян нимĕнле ĕçех те çук-ха» тесе кăларса ярать. Çапла июнĕн 15-мĕшĕнче ĕçлеме пултаракан 120 çынран колхоз производствинче 62 çын çеç ĕçленĕ. Ыттисем, ĕçе чĕнмен пирки, килтех ларнă. Çав вăхăтрах колхоз çум çумлама тытăнман, çĕртме сухине туса çитермен, уя кăлармалли тислĕке çуррине çеç кăларнă; çулĕçр строительствинче те ĕç вăйĕ питех те кирлĕ пулнă. Çапла ĕç пур çĕртенех кăшт пĕр колхозниксем час-часах вăхăта усăсăр ирттереççĕ.

Колхоз производствинче тӳрĕ кăмăлпа ĕçлемен колхозниксемпе колхозницăсене Çĕньялти «Правда» колхозра та хыттăн сивлерĕç. Ку колхозăн пĕрремĕш бригадинче ĕçлеме пултаракан 71 çынран 44-шĕ ĕçкунĕсен минимумĕн пĕрремĕш срокри нормине тултарман, иккĕмĕш бригадăра 67 çынран 39-шĕ тултарман.

Колхоз председателĕн арăмĕ — колхозница Анисия Прохорова 16,70 ĕçкунĕ çеç тунă, унăн хĕрĕ Александра мĕнпурĕ те 9 ĕçкунĕ кăна ĕçлесе илнĕ. Колхоз счетоводĕн арăмĕ те — колхозница Е. Никитина 9,33 ĕçкунĕ çеç тунă. Мĕншĕн-ха вĕсен уйрăмах ĕçрен пăрăнса çӳремелле? Çак ыйтăва та пухура колхозниксем тӳррĕн лартрĕç.

Колхоз производствинчи çакăн пек çитменлĕхсене халех пĕтермелле. Районри çĕрĕç органĕсен колхоз председателĕсемпе бригадирĕсене ялхуçалăх ĕçĕсене йĕркелеме вĕрентмелле.

Е. ВОРОБЬЕВ.

Пионерсемпе шкул ачисем Пĕтĕм Союзри ăмăртăвăн участникĕсем

ШĂХАСАН. Ухманти туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем, пурĕ 30 ача, «Победа» колхозăн уйхирĕнче куллен ĕçлеççĕ. Вĕсем хушшинче ăмăрту вăйлăн пырать. Вĕсенчен нумайăшĕ ĕнтĕ икшер норма тултарма вĕренсе çитрĕç.

Виçĕ кун хушшинче А. Захарова, П. Парамонова, Н. Данилов тата Ольга Семенова вĕренекенсем 40 ĕçкунĕ ĕçлесе илчĕç. Ачасене ĕçре ертсе пыракан А. Гавриловăпа К. Тимошкина учительницăсем каникул вăхăтĕнче калаçусем туса ирттереççĕ, умра тăракан задачăсем çинчен ăнлантарса параççĕ.

А. ОРЛОВ.

ВĔРЕНЕКЕНСЕМ УЙХИР ĔÇĔНЧЕ

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Районри шкул ачисем çуллахи каникула янă хыççăнах колхоз производствинче активлăн ĕçлеме пуçларĕç. Паянхи куна колхоз уйхирĕсенче 1.627 вĕренекен тата 115 учитель ĕçлет.

Анат Кăмăшри вăтам шкулта вĕренекенсем, пĕтĕмпе 229 ача, «Красный пахарь», «1-ое мая» тата «Волга» колхозсенче ĕçлеççĕ. Турханти туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем «Комбинат» колхозра ĕçлеме килĕшнĕ. Çамрăк ачасем пур ĕçе те пысăк хастарлăхпа тата организованно туса пыраççĕ. Вĕренекенсенчен чылайăшĕ ĕç нормисене ирттерсе тултараççĕ. Акă, «Комбинат» колхозра Никандр Бурцев (3-ш класра вĕренекен), Галя Кочеткова (4-ш класс) çум çумланă çĕрте кашни кунах нормăсене ирттерсе тултарнă, ку ĕçрех вĕсем 11—15-шер ĕçкунĕ тунă. Çак колхозрах Иван Ванюков, Аврам Евакков, Иван Соловьев вĕренекенсем çулĕçр строительствинче пĕр кун юлмасăр ĕçлеççĕ.

Учительсем те ĕçре пример кăтартаççĕ. Мăн Улхашри вăтам шкулти учительница Кириллова юлташ кулленхи ĕç нормине ялан ирттерсе тултарать. Çак кунсенче вăл пахчара çум çумласа пĕр кун хушшинче 7 ĕçкунĕ тунă.

ЧЕБОКСАРСКИЙ ФИЛИАЛ ГОРЬКОВСКОГО УЧЕБНОГО КОМБИНАТА Ц. С. У. ГОСПЛАНА СССР

об'являет набор курсантов на отделения:

1) Подготовки бухгалтеров — принимаются лица с 9—10 кл. образованием и лица, имеющие образование не ниже 7-летки, с практическим стажем счетной работы.

Срок обучения 6 месяцев. Плата за весь курс обучения 500 руб.

2) Подготовки счетоводов — принимаются лица с 7-летним образованием. Срок обучения 4 месяца. Плата 320 рублей.

Обучение без отрыва от производства.

Лица, закрепившиеся за определенными организациями, будут учиться бесплатно и обеспечены стипендией.

Заявления принимаются до 10-го июля 1942 года.

Адрес: гор. Чебоксары, Канашская, 21.

2—2.

КАЗАНСКИЙ ГОСУДАРСТВЕННЫЙ СТОМАТОЛОГИЧЕСКИЙ ИНСТИТУТ

об'являет прием на 1942—43 учебный год на первый курс.

Институт готовит врачей-стоматологов, специалистов по болезням полости рта, зубов, языка и челюстно-лицевой области. Принимаются лица в возрасте от 17 до 35 лет, имеющие законченное среднее образование. Срок обучения в институте 2 года 9 месяцев.

Прием заявлений производится с 1-го по 31-ое июля с приложением: 1) подробной автобиографии, 2) подлинника аттестата об окончании среднего учебного заведения, 3) трех фотокарточек (снимок без головного убора размером 3×4 см, с собственноручной подписью поступающего, заверенной гос. учреждением), 4) справки об отношении к военным обязанностям (для военнообязанных); 5) паспорт пред'является лично.

Отличники средней школы, а также окончившие среднюю школу в 1941 и в 1942 году с оценками «отлично» и «хорошо» принимаются без приемных испытаний. Остальные окончившие средние школы принимаются без экзаменов при наличии свободных мест. При недостатке мест прием производится по результатам испытаний по русскому языку и литературе (устные и письменные испытания), по физике и химии. Испытания будут производиться с 15 по 25 августа.

Иногородние студенты обеспечиваются общежитием.

Заявления принимаются в канцелярии Института по адресу: гор. Казань, ул. Бутлерова, дом № 16, телефон 10-39.

ДИРЕКЦИЯ ИНСТИТУТА.

ЧЕБОКСАРСКИЙ ФИЛИАЛ «ЭНЕРГОТРАНСУЧТЕКСТИЛЬ»

НКТекстиля СССР

с 25 июня по 15 июля 1942 года об'являет прием

НА КУРСЫ ПОДГОТОВКИ ШОФЕРОВ III КЛАССА

Обучение на курсах бесплатное.

Срок обучения на курсах с отрывом от производства — 1½ месяца, без отрыва от производства — 3 месяца.

На курсы подготовки шоферов принимаются мужчины и женщины не моложе 17½ лет, имеющие образование не ниже 4 классов.

Для поступления необходимо подать заявление на имя директора, приложив следующие документы: 1) краткую автобиографию, 2) справку об образовании, 3) пять фотокарточек (без головного убора), 4) справку медосмотра, 5) справку от предприятия или колхоза о том, что они не возражают против учебы на курсах, 6) паспорт (предъявляется лично).

Срок подачи заявлений до 10 июля.

Приемные испытания с 10 по 15 июля.

Начало занятий 16 июля 1942 г.

За всеми справками обращаться в канцелярию филиала по адресу: гор. Чебоксары, ул. Володарского, дом № 5, 2-й под'езд, 2-й этаж, с 9 до 18 часов ежедневно.

ЗАВОДУ ТРЕБУЮТСЯ:

инженеры и техники, технологи по холодной обработке металла и нормированию, квалифицированные бухгалтера и кладовщики, а также квалифицированные рабочие: токари, строгальщики, термисты, слесари водопроводчики, жестянники, слесари по сварным и железным конструкциям, электросварщики, инструментальщики, формовщики, обрубщики, лаковары, прессовщики, кузнец-молотобоец, шорник-смазчик, печник, штамповщицы, установщики штампов и пресс-форм, машинисты (компрессоров, литья под давлением и насосов), наборщики, печатники, маляры, каменщики, штукатуры, стекольщик, ящечник, упаковщики, плотники, подсобные рабочие, грузчики, уборщицы-курьеры.

ТРЕБУЮТСЯ пожарные работники и вахтеры-охранники (мужчины и женщины), которые обеспечиваются общежитием.

ПРИНИМАЮТСЯ переквалификанты. Приглашаются учащиеся старших классов средних школ на постоянную и временную работу.

В текущем году при заводе начнет функционировать вечерний электромеханический техникум (без отрыва от производства).

Обращаться по адресу: г. Чебоксары, Ленинградская, 38, бюро пропусков.

2—2.

ЛАШАСЕМ ÇУХАЛЧĔÇ

1) хура ăйăр, „Воля“ ятлă;
2) кăвак кĕсре, „Светлана“ ятлă,
3) Çӳрен кĕсре, „Зойка“ ятлă.
4) Хура кĕсре, „Ласточка“ ятлă.

Пурте 1940—41 çулсенче çуралнăскерсем. Тĕлне пĕлекенсене Пушкăрт ялсоветĕнчи „Заря“ колхоза пĕлтерме ыйтатпăр.

РАЗЫСКИВАЕМ

пропавшую за Волгой с 136 квартала лошадь-матку темно-гнедой масти, 1927 года рождения, грива налево, рост 188 см.

Знающих просим сообщить по адресу: гор. Чебоксары, п. ящ. 12, зам. директора.

2—1

ПРОПАЛИ ДВЕ ЛОШАДИ.

Приметы следующие: жеребец темно-гнедой масти, грива наразвал, возраст 3 года; другая — бурой масти, грива стрижена, растет наразвал, возраст 3 года.

Знающих их местонахождение просим сообщить по адресу: Чувашская АССР, Чебоксарский район, Альгешевский сельсовет, правлению колхоза имени К. Е. Ворошилова.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 171. Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 319. Ф. 6. 58 64 п. л: